Материал представлен из коллекции электронной библиотеки «Писатели Чувашии – детям» – **pchd21.ru**
Электронная библиотека создана Чувашской республиканской детско-юношеской библиотекой **– www.rdub21.ru** – на средства гранта Президента Российской Федерации для поддержки творческих проектов общенационального значения в области культуры и искусства

## Автор: Гордеева Светлана Денисовна

## Книга: Верить в чудеса = Тӗлӗнтермӗшсен тӗнчи

## Рассказ: Пӗрремӗш юр

Юр ҫӗр каҫипех вӗҫтерчӗ
Мамӑк евӗр ярӑнса,
Хӗл ҫитни ҫинчен систерчӗ
Парӑс евӗр хупласа.

Ир-ирех кушак вӑранчӗ,
Пӑхрӗ те чӳречерен
Карӑнса тӑма вӑтанчӗ
Тӗлӗнсе чун-чӗререн.

Кам капла тума пултарнӑ?
Тӗлӗнтермӗш! Ах тӗнче!
Тахӑшӗ тӑкса тултарнӑ
Шур хӑйма кил картинче.

Чӗлхине кушак ҫуларӗ,
Чупса тухрӗ урама,
Сӑмсине юр кӑтӑкларӗ –
Ӗмӗт кайрӗ харама.

Силленсе ҫилленнӗн пулчӗ:
Тутлӑ мар-мӗн, ай тур-тур!
Кӳршӗсен кушакӗ кулчӗ:
– Хӑйма мар ҫав ку, шур юр.

Все тексты взяты из открытых источников и выложены на сайте для не коммерческого использования.
Все права на тексты принадлежат только их правообладателям.